Ыран – Потребительсен прависене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун

# Хамăрăн правасене пĕлес пулать

Пирĕнтен кашниех хăйĕн пурнăçĕнче потребитель пулса тăрать - магазинра тавар туяннă чух та, сĕтелпукан мастерскойĕнче диван заказ панă чух та, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен пулăшăвĕпе усă курнă чух та.

Тепĕр чухне вара тĕрлĕрен проблемăсем те сахал мар сиксе тухаççĕ: е тавар пахалăхĕ тивĕçтермест, уйăхранах диван ванса каять-и е пурăнмалли çурт-йĕрте температура сивĕ. Кун пек лару-тăрăва лексен чылайăшĕ хăйсен мĕнле правасем пуррине пĕлмест-ха - тавара улăштарма та, çав хакпах пахалăхлă пулăшупа усă курма май пуррине те.

Тĕнчере потребительсен прависене хӳтĕлес ыйтăва 1962 çултанпа татса параççĕ. Потребительсен прависене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна вара пĕрремĕш хут 1983 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче паллă тунă. Тепĕр икĕ çултан - 1985 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче - ООН Генеральнăй Ассамблеи потребительсен прависене хӳтĕлессин тĕп принципĕсене йышăннă.

Потребительсен пĕрлешĕвĕсен пĕтĕм тĕнчери организацийĕ потребительсен 8 тĕп правине йышăнать:

- тĕп нушасене тивĕçтерессин правине (тĕп база таварĕсем тата çăмăллăхсем);
- хăрушсăрлăх правине (сывлăхшăн тата пурнăçшăн хăрушлăх кăларса тăратакан продуктсемпе производство процесĕсенчен тата çăмăллăхсенчен сыхланма май пурри);
- информаци правине (ултавлă е тĕрĕс мар информацирен, рекламăран, таварсем çине çырса хунисенчен сыхланма май пурри);
- суйласа илессин правине (кирек епле тавар суйласа илме е услугăсемпе усă курма май пурри);
- потребительсен интересĕсене кăтартассин правине (потребительсене хăйсен интересĕсене палăртнă чух правительство тата патшалăх органĕсем вĕсене шута илме тивĕççи);
- саплаштарассин правине (тĕп претензисене тивĕçтерес тесе право пулăшăвĕпе усă курма май пурри);
- потребительсен пĕлĕвĕн правине (потребительсен хăйсен прависене тивĕçтерессишĕн пĕлĕве, ăсталăха ӳстерме пурнăç тăршшĕпех май пурри);
- таса тавралăхăн правине.

Анчах та хăйсен прависемпе усă курма пурте пĕлмест-ха тата пултараймасть. Саккун акчĕсем, правилăсем, гарантисем пирки камран ыйтмалла, кам пулăшма пултарĕ?

2005 çултанпа федеративлă административлă реформа шайĕнче санитари службинчен потребительсен прависене хӳтĕлессин тата çынсен йĕркелĕхĕн сферине тĕрĕслесе тăрассин службине туса хунă. Потребительсен прависене хӳтĕлессипе граждансен пур ыйтăвĕсене те пăхса тухаççă кунта. Ку ыйтусене Раççей Федерацийĕн 1992 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче йышăннă «Потребительсен прависене хӳтĕлессин саккунĕ» Саккунра тата РФ Правительстви уйрăм таварсене сутассипе йышăннă Правилăсенче çутатнă.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Çулталăк кĕнеки - 2005

# Кĕнекепе туслисем йышли савăнтарать

Çынсен кĕнеке патне туртăнас кăмăлне ӳстерес, вулас туртăма аталантарас, чăваш кĕнекин пĕлтерĕшне ӳстерес тĕллевпе Чăваш Республикин наци библиотеки кашни çулах “Литературăлла Чăваш Ен: çулталăк кĕнеки” конкурс ирттерет. Кăçал ку конкурса 2005 çулта тухнă кĕнекесене кĕртрĕç.

Библиотекăна çӳрекенсем **Геннадий Максимовăн “Сталин грамоти”** кĕнекине юратса вулаççĕ. Çыравçă кĕнекене икĕ пайран калăпланă. Пĕрремĕшне тĕрлĕ çулта çырнă повеçпе калавсене кĕртнĕ. Хайлавсенчи геройсем саманан ырă тата килпетсĕр енĕсене ăнланмалла уçса параççĕ. Автор сюжетсене йĕркелесе пыни, илĕртӳллĕ чĕлхепе çырса кăтартни вулакана сăнарсен пурнăçне илсе кĕрет, геройсемпе пĕрле юрату туйăмне тутантарать, суяпа икĕ питлĕх аварĕнче асаплантарать.

Кĕнекен иккĕмĕш пайĕ **“Шухăшсен çаврăмĕ...”** ятпа пичетленнĕ. Унти статьясем вун-вун çул каяллахипе паянхи кун-çула танлаштараççĕ, автор тĕнче шайĕнчи диктаторсен – Гитлер, Ленин, Наполеон – пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне тишкернĕ, вĕсемпе çыхăннă интереслĕ фактсене ятарлă сыпăксене кĕртнĕ.

Конкурса кĕртнĕ тепĕр кĕнеке **Сергей Павлов çырнă “Тан таппи”** роман.

Çыравçă “Сĕлкĕш” романĕпе пуçланă ярăма малалла тăсса çĕнĕ хайлавĕнче ялти хирĕçӳсем урлă иртнĕ ĕмĕрти 90-мĕш çулсенчи тапхăра, паянхи самана çывхарса килнине сăнать. Тĕп герой – Павел Урнов тĕрмерен таврăнать. Çĕршыври лару-тăрупа усă курса халăха хăй майлă çавăрать, колхоза пайлаттарать. Ытларах хăйшĕн тăрăшать, ĕçкĕпе илĕртсе çынсене килĕшӳсĕр ĕç-пуça явăçтарать, çемьесене аркатать.

Кĕнекене кĕнĕ “Хӳрине татнă чăх” повеçпе “Шуйттан сукмакĕ”, “Йăкăлти Маруç” калавсенчи сăнарсен трагедийĕ чун тасалăхне, юратăва, çынлăха упрама вĕрентет.

2005 çулта **Митта Ваçлейĕн “Çырнисен пуххи”** икĕ томпа тухрĕ. Усă курма меллĕ пултăр тесе çыравçăн прозипе поэзине уйрăмшар кĕнекере пичетлесе кăларнă. Пĕрремĕш тома сăвăлла хайлавсене, тата куçарусене кĕртнĕ, поэт хăйсен ялĕнчи Каттис Мишшинчен çырса илнĕ халăх юррисене хушса панă.

Митта Ваçлейĕн “Çырнисен пуххин” иккĕмĕш томне пысăк пултарулăхлă çыравçăн прозăлла çырнă хайлавĕсемпе куçарусем, çырусем, статьясемпе рецензисем, кун кĕнеки тата документсем кĕнĕ.

“Çырнисен пуххи” чăваш вулаканĕсене ăс-хакăлпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен ырă витĕм кӳрессе шанса тăратпăр.

2005 çулта тухнă çак кĕнекесене эсир Муркашри тĕп библиотека фондĕнче тупса вулама пултаратăр: В. Алендей çырнă “Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт”, Д. Гордеев çырнă “Пăсташ”, Г. Ефимовăн “Телейсĕр чух телейлĕскер” кĕнеки, П. Хусанкайăн ултă томлă çырнисен пуххи (пиллĕкмĕш томĕ 2005 çулта тухнă) тата ытти те. Вырăсла вулама юратакансене П. Евлампьевăн “Париж не стоит мессы” кĕнеки, И. Дуплий çырнă “Что было, то было” кĕнекене кĕнĕ калавĕсем, Ордем Галин хайлавĕсем килĕшессе шанатпăр.

Хисеплĕ вулакансем! Килĕр, çӳрĕр библиотекăна. Библиотека ĕçченĕсем сире яланах хавас. Эпир сирĕнтен конкурса тăратнă кĕнекесем çинчен, хăвăра килĕшнĕ хайлавсем пирки шухăшăрсене пĕлтерме ыйтатпăр.

**Н. ЕГОРОВА,**
**Муркашри тĕп библиотека библиотекарĕ.**

“Радиохум – хаçат страницинче: Суд пырать”

# Эрех хăвачĕ çынран та вăйлăрах-шим?

## Умсăмах вырăнне

**Эрех... Çак тăватă саспаллинчен тăракан хаяр шĕвек мĕн тери хăватлине паян çитĕннисем çеç мар, ачасем те çителĕклех туйса илчĕç ĕнтĕ. Ăна тутансан туйăнакан хăвачĕ пирки мар кунта сăмах. Вăл чĕрене хăваракан тарăн йĕр пирки, çемьене илсе килекен инкексем пирки. Районти миçе çын паян тăван тĕпренчĕкĕсене çак усал шĕвекпе улăштарнине кам шутласа кăларайĕ? Паян каç миçе ача ашшĕ ӳсĕрле, миçе хĕрарăм мăшăрĕ пуçа çак шĕвекпе минретнипе хĕн курать, миçен тата кӳрше е тăванĕсем патне çĕр каçма тухса тараççĕ?**

**Сăмах кунта эрех хăватне çĕнеймесĕр юратнă мăшăрне, кун çути парнеленĕ тăван амăшне, кашни кун пĕлсе тăракан тăван-пĕлĕше хĕрхенменни пирки. Вĕсен шăпине пĕр шелсĕр татни пирки. Эй, тĕнче! Мĕн тăвать пирĕнпе эрех? Айăпĕ эрехре-ши? Хамăрта мар-ши? Çак пăтранчăк шĕвек çынна йĕркерен кăларасса пĕлсех унран хăпайманнинче мар-ши? Тата... Тата кӳршĕри шуйхашăва юнашартисем “илтмĕше” пенинче мар-ши? Пĕтĕмлетĕве хăв ту, хисеплĕ вулаканăм.**

## Амăшĕ кĕтсе илеймерĕ...

Мĕн тери хаклă вăл çыру салтакшăн. Тăван кĕтесрен килекен çыру. Тăван анне хăй аллипе çырнă çырура килте те, ытти тăвансемпе те йăлтах йĕркеллĕ иккенни пирки пĕлтернĕ сăмахсем. Анчах та иртнĕ çулхи сентябрьте Денис амăшĕнчен хăй ун умĕн янă çыру çине хурав кĕтсе илеймерĕ. Ун вырăнне амăшне пытарма чĕнсе янă телеграмма чĕрене çĕçĕрен хăрушăрах тирчĕ...

Службăра тăнă чухне ун ахаль те чĕри вырăнта марччĕ-ха. Мĕнле-ши унта амăшĕ? Çырура пĕрре кăна мар вăл ашшĕ çĕнĕрен ĕçме пуçлани çинчен пăшăрханса çыратчĕ. Ашшĕ ĕçсе килсен каллех хĕнемест-ши? Хăй пĕчĕк чухне хăй куçĕпе сахал курнă-и вăл ӳсĕр ашшĕ амăшне хĕненине? Амăшĕ икĕ ывăл ачипе сахал-и тухса тарнă килтен çакăн пек вăхăтсенче? Амăшне хӳтĕлеме тăрсан, пĕрре мар патак çинĕ-и вăл ашшĕнчен?

Милицинче 15-шер талăк ларса тухни те усăллă пулмарĕ çав Ваçкассинче пурăнакан Л. Н. Петровшăн. Иртнĕ çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕнче çав эрехе ытлашши кӳпсе лартман пулсан икĕ ывăл çуратса çитĕнтернĕ мăшăрне вилмеллех хĕненĕ пулĕччĕ-ши?

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче кăнтăрла çĕр улми кăларнă хыççăн çак шĕвеке шăмшак çемçелмелĕх кăна ĕçмерĕ çав вăл. Пуç минрени 14 сехетре выртса çывăрсан та иртмерĕ. Пӳртре çук мăшăрне шырарĕ. Лешĕ пӳрте кĕрсен кĕвĕçӳ туйăмĕ эрех мухмăрĕпе хутăшса хăрушă туйăма куçрĕ... Урса кайнă арçын хĕрарăма пуçран çапрĕ, мăйĕнчен пăврĕ, ăçтан килчĕ унтан çапрĕ, çапрĕ... Хăйне, хăйĕн çиллине чараймарĕ. Арăмĕ хытă ыратнăран ахлатни, ахлатайми пулсан нăйкăшни те унра шел туйăмне çуратаймарĕ. Унтан хăй судра каланă тăрăх, мăшăрне кравать çине илсе вырттарать.

Ирхине вара ним пулман пекех арăмне пăрахса хăварса, магазина эрех патне тухса утать. Халиччен те мăшăрне пĕрре мар хĕненĕскер, кунхинче те йăлтах йĕркеллĕ пулĕ, терĕ-ши е тата мĕнле те пулин шухăш пуçне кĕчĕ-ши? Каялла таврăннă çĕре урайĕнче выртакан мăшăрĕ тытса пăрахнă, шăнăр туртнă пек чарăнайми туртăнма пуçланине курсан, ăна искусствăлла майпа сывлаттарма пăхрĕ(судра панă кăтартуран), çăварĕнчен эрех ярасшăн пулчĕ, анчах усси пулмарĕ – мăшăрĕ куç умĕнчех ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупрĕ.

Эрехе пула тепĕр преступлени пурнăçа вăхăтсăр татрĕ. Л. Н. Петров РФ УК 111-мĕш статйинче(4 пай) кăтартнă преступление турĕ: шухăшласах çыннăн пурнăçне йывăр сиен кӳчĕ, çапла майпа асăрханмасăр çын пурнăçне татрĕ.

Халĕ шухăшласа пăхар-ха. Пулнă пулĕччĕ-ши çак преступлени пуçа эрехпе минретмен пулсан? Çук пулĕ. Судра айăпланакан хăй урса кайнин сăлтавне кĕвĕçмелли сăлтав пулнипе ăнлантарать. Тăр уйăлла арçынсем те, хĕрарăмсем те пĕр-пĕрне кĕвĕçмелли сăлтавсем тупса панă пулĕччĕç-ши? Ĕненесех килмест. Ахальтен каламаççĕ-çке ваттисем эрех пурне те пĕр карта лартать, тесе: ертӳçĕсене те, рядовойсене те. Апла пулсан хĕрарăмпа арçынна та уйăрса тăмасть: кашниех картран тухма, тивĕçпе чыса çухатма пултарать эрехе пулах.

Свидетельсен кăтартăвĕсенчен çакă та палăрать. Сентябрĕн 10-мĕшĕнче ирхине 2 сехетсенче дискотекăран таврăннă чух Петровсен килĕнчи çуйхашăва илтекен пулнă. Çапла-çке эпир: хушшахуппа кĕме хăнăхман. Кӳршĕре шари-шари çухăрсан та, тĕнче кисренмеллех çапăçсан та “хăлхана хупласа” çывăрма выртатпăр. Вăхăтра çитĕннисене кӳршĕсене систернĕ пулсан, ĕç-пуç çакăн пекех çаврăнса тухнă пулĕччĕ-ши? Çирĕп режимлă колонире 7 çул ларнă хушăра хăйĕн айăпне ăнланĕ-ши Л. Н. Петров? Мăшăрĕпе юратса, ĕмĕр-ĕмĕр телейлĕ пулас ĕмĕтпе пĕрлешни аса килĕ-ши, тăван ачисене тăван амăшĕнчен хăй аллипе хăй уйăрнăшăн каçарĕ-ши вăл тата хăйне хăй?

## Халĕ те хĕрхенет-ши амăшĕн чунĕ?

Çемьере йыш хушăнни мĕн тери телей вăл. Ача сăпки умĕнче ыйхăсăр ирттернĕ каçсем сахал-и пулаççĕ амăшĕн? Чирлесен ачисене сыватма, кашни кунах вĕсене телей пама тархаслаççĕ аннесем Турăран. Анаткас Улхашри (Нижние Олгаши) З. И. Ивановская 1960 çулта ывăл çуралсан мĕн тери хĕпĕртерĕ пулĕ. Ватлăхра хама пăхакан пулать, терĕ пулĕ. Ĕненнĕ пулĕччĕ-ши ун чухне кам та пулин ăна эсĕ хăв çуратнă ачу аллинчен вилетĕн тенĕ пулсан. Мĕнле амăшĕ ĕненме пултарĕ çав хăрушă шухăша. Çиес килнине çиеймесĕр, тăхăнас килнине тăхăнаймасăр йăлтах ачашăн пултăр тесе тăрăшать-çке хĕрарăм. Ывăлĕ Игорь аслă пĕлӳ илчĕ, çемьелленчĕ. Çемйипе пурăнса пĕтереймерĕ. Амăшне те шута хуракан ывăл пулаймарĕ. Ун çине алă çĕклеме те именни туни пулмарĕ. Çак сăлтавпах ăна 2005 çулта ирĕкрен хăтарнăччĕ. 10 уйăхран вăхăтчен условно майпа киле таврăнчĕ.

Шăп çавăнтанпа ĕнтĕ амăшне каллех час-часах кăвак куçпа курма пуçларĕç ялта. Сăлтавĕ пирки ыйтсан, калаçуран пăрăнма тăрăшатчĕ хĕрарăм е ăнсăртран ӳкни, çапăнни çине йăвантаратчĕ. Хăй кунçул панă ачине хăйне хĕнесен те хӳтĕлес туйăм амăшĕн пĕрре те чакман-çке. Ниçта та ĕçлемен ывăлĕ вара ăна хаклама мар, эрех ĕçмессерен амăшне çапасси-тапасси те ним те марччĕ. 2006 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче те, ӳсĕрскер, амăшĕпе чăркăшмалли сăлтав тупрĕ. Чăркăшма çеç-и? Тапрĕ, çапрĕ вăл 77 çулхи амăшне, юн юхтарса выртаканскерне пăрахса хăварчĕ картишнех. Йывăр сурансене пула амăшĕ вырăнтах вилсе кайрĕ... Çакăншăн ӳстерчĕ- и вара вăл ывăлне? Хăй вилĕмне вăхăтсăр тупма çуратрĕ-и вара вăл ăна?

Намăссăр ывăл судра та хăй амăшне тĕкĕнменни пирки ăнлантарма пăхрĕ. Вăл килте çĕр улми пĕçернĕ хушăра чӳречерен курах кайнă имĕш амăш картишĕнче выртнине. Хăй вара преступлени йĕрне пытарас тесе амăшĕ çинчи кофтăна улăштарса урăхла типĕ çипуça тăхăнтартать, хăйĕн аттине те кăларса пăрахать.

Каллех эрехе пула кун-çул татăлчĕ. Хăйне çуратса кун-çул парнеленĕ амăшне те хĕрхенмерĕ эрехпе минренĕ ку этем. Тăван амăшĕнчен те хаклăрах пулчĕ-ши вара çав пăтранчăк шыв?

Эрех çынлăха пĕтерсе, ачисене ашшĕ-амăшне вĕлерес çул çине тăратрĕ. Çавах ăна ĕçекенсен йышĕ чакмасть. Уррисем вара çав усал шăвек кăларакан çил-тăман камсен картишĕнче, пӳртĕнче çавăрттарнине курмăш пулатпăр. Çапăçчăрах, ман мĕн ĕç пур? Çак шухăшпа пăрăнса иртетпĕр. Ку тĕслĕхре те ачипе амăшĕ хушшинчи хирĕçĕве илтекенсем пулнă. Ним пулман пекех хăйсен çулĕпе утнă. И. Н Ивановский РФ УК 111(4 пай) статйинче кăтартнă преступление тунăшăн халĕ çирĕп режимлă колонире ларать ĕнтĕ. 11 çул хушшинче 11 хутчен те пулин ӳкĕнсе, шухăшĕнче те пулин амăшĕнчен каçару ыйтĕ-ши вăл? Час-часах хăй çуратнă ывăлĕ хĕненине пурăннă чух çынсенчен пытарнă амăшĕн чунĕ канăç тупайĕ-ши? Халĕ те ывăлĕ пурнăçра хăй вырăнне тупайманшăн татăлать пулĕ вăл...

## Пĕтĕмлетӳ вырăнне

**Эрех тăванлăх туйăмне те туртса илет иккен этемрен. Апла пулсан тĕлĕнме кирлех-и эрех ют çынпа ют çынна çапăçтарнинчен? Ак, ку тĕслĕхре шăпах çапла пулса тухнă та. Иртнĕ çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче Ильинкăра малтан та судпа айăпланнă С. М. Киликов 67 çулхи арçынна ӳсĕрле пуçран мăлатукпа хĕнесе вĕлерет. Виллине çырмана кайса чикет. Çынлăх пирки-и вара кунта сăмах. Район сучĕ ăна РФ УК 105(1 пай) статйинче кăтартнă преступление тунăшăн 11 çуллăха çирĕп режимлă колоние ярса ирĕкрен хăтарма йышăнчĕ.**

**Мĕн чухлĕ çын пурнăçĕ татăлать паян эрехе пула? Мĕн чухлĕ çынна преступлени çулĕ çине тăрататать вăл? Миçе ачана ашшĕ-амăшĕ пур çĕртех тăлăх пурнăç пиллет эрех? Эрехре-ши айăпĕ? Эрехре мар, хамăртах. Хамăрăнах ăнланасчĕ çакна. Тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тăвасчĕ.**

**Пичете район сучĕн материалĕсем тăрăх**
**Л. ТУКТИНА хатĕрленĕ.**

Ыйту – хурав

# Çуралнă кунран хушса тӳлеççĕ

***Иртнĕ çултан тытăнса 80 çул тултарнă ват çынсене пенси пĕр уйăх маларах хушса тӳлеме тытăнни пирки илтнĕччĕ. Ку чăннипех çавăн пек-и? Тата 80 çул тултарнисен пенсие çĕнĕрен шутласа пама тытăнма заявлени çырмалла-и?***

**В. ВАСИЛЬЕВА.**

РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, унччен 80 çул тултаракан çынна пенсин база пайне икĕ хут ӳстерсе тепĕр уйăхран тытăнса кăна тӳлеме тытăннă пулнă. Çĕнĕ законодательствăпа килĕшӳллĕн вара пенсие юбилей кунĕнчен тытăнсах хăпартса параççĕ.

Тĕслĕх илсе пăхар. Калăпăр, пенсионер февралĕн 15-мĕшĕнче 80 çулхи юбилейне паллă тунă. Унччен ăна пенсие ӳстерсе мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса тӳленĕ. Халĕ вара пенсие февральтех çĕнĕрен шутласа параççĕ. Анчах та пĕтĕм уйăхшăн мар, 80 çул тултарнин кунĕнчен тытăнса. Тепĕр майлă каласан, февралĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса февралĕн 28-мĕшĕчченхи тапхăршăн тата малалла.

80 çул тултарнипе пенсин база пайне 1-мĕш ушкăнри инвалидсемсĕр пуçне пур пенсионерсене те хăпартса параççĕ. 1-мĕш ушкăнри инвалидсенне ăна унччене икĕ хут ӳстерсе тӳлеççĕ ĕнтĕ. Пенсие çĕнĕрен шутласа пама заявлени çырма кирлĕ мар, граждансем 80 çул тултарсан пенсие заявленисĕрех хушса тӳлеме тытăнаççĕ.

Усăллă канашсем

**Ĕне çилли çинчи шĕпĕнсене мĕнпе пĕтермелле?**

Халăх медицини çилĕ çинчи шĕпĕнсене касторка çăвĕ сĕрни пĕтерет тесе çирĕплетет. Ĕнене сăвас умĕн те, хыççăн та çак çупа сăтăрса массаж тумалла.

Шĕпĕн курăкĕ (чистотел) те пулăшать. Ăна татса сĕткенĕпе шĕпĕнсене тĕкмелле. Чăрмавлă, анчах шанчăклă меслет.

* * *

**Услам çăва нумай вăхăт упрамалли ансат меслет пур-и?**

Ун пек чух çапла тăвăр. 1 литр шывра 1 чей кашăкĕ тăвар ирĕлтермелле, çав шывра çăва çумалла. Унтан типĕ банкăна пусса тултармалла, çиелтен банка мăйĕпе тан тăвар тултармалла. Вĕриленĕ капрон хупăлчапа хупламалла. Çиес умĕн тăвара кашăкпа ăсса сирмелле.